**Шикленнĕ патшасем поэтсенчен**

Шикленнĕ патшасем поэтсенчен,
Поэтсене дуэльсенче пĕтернĕ.
Элек-челек çӳрет вĕсем çинчен,
Чăн поэтсен шăпи ялан пит эрлĕ.

Поэт вăл мыскараçă та хăш чух,
Хăш чух поэт çатта та çапкаланчăк.
Анчах вăл нихăçан пулман ансух,
Вăл нихăçан та пулме çăткăн анчăк

Чи харсăр, ырă çын та — поэтах,
Вышкайсăр çӳллĕ чăн поэтăн шайĕ.
Ун ĕçĕ те, хисепĕ те пайтах,
Унпа пĕр президент та танлашаймĕ.

Поэт туять этемлĕх тивĕçне,
Çунать çап-çуттăн çулĕ çăлтăр витĕр.
Кайсассăн та кунтан ун тĕп ĕçне
Хур кайăк çулĕнчи тусан çеç витĕ.

*Смолин, А. «Шикленнĕ патшасем поэтсенчен...» : [сăвă] / А. Смолин // Тăван Атăл. – 2010. – № 9. – С. 81.*